**Тупмалли**

**Ю. Сементер.** Ӳсӗм ҫулӗпе

**В. Ҫавыҫов-Анатри.** Чӑвашлӑха упрар-ха, упрар!

**Кукамай кӑмӑлӗ.** *Кӗҫӗн ҫулхи ачасем валли ҫырнӑ калавсем*
Эсӗ ан кулян
Катьӑ паттӑрлӑхӗ
Хӑвна юратнине тӗрӗслемелли мел
Улайккана пула
Чее мулкач
Таврӑнсам каялла, «Юр пӗрчи!»
Кукамай кӑмӑлӗ
Тӑрри шӑтӑк
Каҫхи калаҫу
Юлташпа вӑйсӑрри те вӑйлӑ
Сад ӑстисем

**Юмах ятӑм, юптартӑм…** *Юмахсем*
Наян автан
Ҫулҫӑ
Уйӑх тата Упа ҫури
Тилӗпе Чӗрӗп
Пакшасен калаҫӑвне итленӗ Каюран шухӑшӗ
Ҫилпи
Кӑтьӑк ятлӑ кӑткӑ ҫинчен виҫӗ юмах
*Пӗрремӗш юмах: Кӑтьӑк чапа тухни*
*Иккӗмӗш юмах: Хуйӑха ӳкнӗ Кӑтьӑк ҫумӑр айне лексе чирлесе ӳкет*
*Виҫҫӗмӗш юмах: Кӑтьӑк хӑнана мӗнле кайса килни*
Тилӗ тус пурнӑҫӗнчен
*Тилӗпе Тӑмана*
*Тилӗпе Чӑх чӗппи*
*Тилӗпе Чӑх*
*Тилӗпе Автан*
*Тилӗпе Хампур*
Шипшип
Юратупа Таракат

**Уй урлӑ ҫул.** *Калавсем*
Ҫухатакана ҫӗр ҫылӑх
Вӗҫсӗр юрӑ е трагифарс
Ҫӑлӑнӑҫ
Кишӗр юлашки
Ҫул ҫинче
Уй урлӑ ҫул
«Хӑҫан вилес?»
Куҫса килнисем
Поль Мориа оркестрӗ
Тӗлпулу
Уйӑхсӑр каҫ тӗлӗнтермӗшӗ
Икӗ кӳршӗ
Микул ӑстаҫӑ
Ҫӗркаҫ

Халал хучĕ

**Пĕлĕт çинчи сăнсем.** *Миниатюрăсем*

**Шурă Шупашкар юмахĕ.** *Пьеса*

**Патриция МакГер.** Йăлтах çĕнтерӳçĕне юлать. *Куçару*

## КУКАМАЙ КĂМĂЛĔ

*Кĕçĕн çулхи ачасем валли çырнă калавсем*

### Хăвна юратнине тĕрĕслемелли мел

Силпи темтепĕр шутласа кăларма питĕ ăста. Пĕрре çапла пĕчĕк хĕр ачан аппашĕ ăна чăнахах та юратнине питĕ пĕлесси килсе кайнă. Мĕнле тĕрĕслемелле ку туйăма? Силпи вăл çавăнпа Силпи, нимле лару-тăрура та аптраса тăмасть.

Хĕр ача пахчана тухрĕ те карта хĕррипе ӳсекен салтак тӳми çеçкисене пуçтарчĕ. Унтан пӳрте кĕрсе урай тăршшĕпех çеçкесене таткаласа пăрахса тухрĕ. Часах урай шурă чечекпе чапăрланчĕ. Унтан хĕр ача чӳрече умне пырса ларчĕ те аппăшĕ шкултан килессе чăтăмсăррăн кĕтме пуçларĕ.

Акă, Илемпи çурт умĕпе утса иртрĕ, часах пӳрте кĕрĕ. Силпи вара йăпăр-япăр урай варрине тăсăлса выртрĕ, куçĕсене хупса аллисене кăкăрĕ тĕлне пуçтарса тытрĕ. Вилнĕ çын çапла выртнине курнă вăл, пĕлет. Нумаях пулмасть кăна-ха кӳршĕри Анук аппана пытарчĕç, амăшĕпе пĕрле кĕлĕ вуланă çĕре кĕрсе тухнăччĕ вăл. Халĕ ĕнтĕ вилнĕ пек пулса аппашĕн юратăвне тĕрĕслет вăл. Илемпи пӳрте кĕрсе тăчĕ. Кĕчĕ те алăк патĕнчех шанк хытса тăчĕ. Мĕне пĕлтерет ку? Урай тулли салтак тӳми чечекĕ, вĕсем çинче Силпи йăмăкĕ выртать. Мĕн туса выртать вăл? Мĕншĕн куçĕ хупă тата? Чĕрех-и вăл? Илемпи хăраса ӳкрĕ. Шăп пӳлĕмре чĕре тапни те илтĕнет пулĕ.

– Силпи, – шиклĕн сасă пачĕ Илемпи.

Лешĕ чĕнмест. Шăпах.

– Силпи теп, – хальхинче хытăрах чĕнчĕ аппăшĕ.

Каллех шăп.

– Силпи, мĕн пулнă сана?! – Илемпи йăмăкĕ патне ытканчĕ. – Эсĕ чĕрех-и?

Силпи вара, шеремет хĕр ачи, кулса ярас марччĕ тесе чăтăмлăн, сас памасăр, аран-аран асăрханса сывлать.

– Силпи, эсĕ вилнĕ-им? Ма нимĕн те чĕнместĕн? – кăшкăрса йĕрсе ячĕ Илемпи.

Йăмăкĕ чăтаймасар йăл-л кулса ячĕ те куçне уçрĕ.

– Çук-çке, вилмен, – терĕ ним пулман пек лăпкăн кăна.

– Ну, Силпи, эсĕ мана хăратса вĕлереттĕн. Ма кун пек хăтлантăн?

– Эсĕ мана юратнине пĕлес килчĕ, – урайне тăрса ларчĕ йăмăкĕ.

– Вăт ухма-а-ах... Халь вара пĕлтĕн-и?

– Ăхă. Эсĕ мана чăнах та юратан. Авă мĕнле кăшкăрса йĕрсе ятăн. Мана шалккă пулчĕ-и? – кулкаласа ларать Силпи.

– Сана куншăн пĕрре патак памалла, – ятлаçать аппăшĕ. – Часрах урайне шăлса кай. Хăв варланă, хăвах тасат.

Аппăшĕ ятлаçнипе Силпи кăмăлĕ кăштах пусарăнчĕ, паллах. «Ытлашшипех тĕрĕслесе пăрахрăм пулмалла», – шутларĕ вăл, урай шăлна май.

### Чее мулкач
### (Асатте каласа панинчен)

Кĕркуннеччĕ ун чухне. Пахчари çимĕçсене пĕтĕмпех пуçтарса кĕртнĕ ĕнтĕ. Купăстасем кăна чат шурă та çавра пуçĕсемпе хура ана çинче «хальччен мĕн туса ларатпăр-ха?» тенĕн тĕлĕнсе пăхатчĕç тавралла. Кунĕ уяр пекчĕ те, тухам-ха пахчана, çĕрулми аврине

çунтарам, терĕм.

Ват çын ват çынах çав, аран-аран кăштăртаткаласа авăрсене купасем туса пуçтартăм та чĕртсе ятăм. Нӳрĕ авăр çунасшăнах мар, йĕри-тавралла тĕтĕм сапалать. Вăл çуннă вăхăтра тесе пахча хыçĕнчи вăрманпа киленсе тăратăп. Мĕн ачаран çак вăрман куç умĕнче, анчах çаплах тĕлĕнме пăрахаймастăп унран. Ялан улшăнса, выляса тăрать вăл. Акă халĕ те, çурри çарална пулин те, вăрман çаплах илемлĕ те илĕртӳллĕ. Çапла шухăша кайса тăнă вăхăтра сисмен те эпĕ, тĕтĕм ăшĕнчен тенĕ пек манăн умма мулкач сикрĕ тухрĕ! Тĕлĕнсе те ĕлкĕреймерĕм, вăл çумранах сиксе иртрĕ те мунча хыçне кайса пытанчĕ. Вăл мана пач та асăрхамасть тейĕн. «Ак-ак-ак, мĕне пĕлтерет ку? Мулкачсем çынран та хăрами пулнă. Тĕнче пĕтет пу-уль...» – шухашлатăп хам.

Унччен-и, кунччен-и, тахăш самантра карта леш енче сарă-хĕрлĕ тĕс курăнса кайрĕ. Куçсем витĕрех мар та, пĕрех палласа илтĕм: тилĕ вĕт ку! Халĕ ĕнтĕ пĕтĕмпех ăнлантăм: мулкача тилĕ хăвалана. Ку вара, ах, тилĕрен те чеерех-çке куян тус, тилĕн ирхи апачĕ пулас килменнипе çын патĕнче çăлăнăç шырама паттăрлăх çитернĕ.

Паллах, эпĕ мулкач хутне кĕме шут тытрăм. Алăри сенĕкпе тилĕ еннелле хăмсара-хăмсара ăна кунтан хăваларăм. Лапсăркка хӳре вара чăтаймарĕ, вăрманалла лапăстатрĕ. Çакна пăхса ларакан мулкач мунча хыçĕнчен сиксе тухрĕ те эпĕ ним тума ĕлкĕриччен пахчаран тухса та вĕçрĕ. Таçталла çул тытрĕ, курса та юлаймарăм, иçмасса. Шел, ахалех васкаса тухса тарчĕ вăл, эпĕ ăна кишĕрпе хăналасшăнччĕ.

## ЮМАХ ЯТĂМ, ЮПТАРТĂМ…

*Юмахсем*

### Наян автан

Пĕр мучипе кинемейĕн питĕ наян Автан пулнă, тет. Вăл ирхине ирех тăрса авăтман. Хĕвел çӳле хăпарсан кăна çывăрса тăна. Унтан кашта çинчен вĕçсе аннă, тет те, кăкăрне каçăртса картиш варринелле уттарнă. Унта ăна валли савăтпа лартса панă тулă пулнă. Çапла Автан кунран-кун апат çинĕ те пахчара е урамра усăлса çӳренĕ, унтан çыварма кайнă...

Хай мучипе кинемей тарăхсах çитеççĕ, тет. Кашни курмассеренех Автана ятлама пуçлаççĕ: «Кахал эсĕ. Нимĕн те тавасшăн мар. Акă пусăпăр та яшка пĕçерсе çийĕпĕр санран». Автан ватăсем çине пуçне чалăштарса пăхса илчĕ те: «Эх, эсир капла калаçатăр-и? Каятăп! Сире пăрахса каятăп», – тесе кăшкарчĕ те картишĕнчен тухса утрĕ, тет.

Кинемей Автана хĕрхенсе: «Ăçта каятăн? Таврăн каялла. Пĕтетĕн вĕт пирĕнсĕр», – тесе кăшкăрать, тет, хыçалтан. Автанĕ çаврăнса та пăхмарĕ, тет.

Çапла вăл вăрмана çитет. Кунтах юлташсем тупать. Пакша, Чĕрĕп, Мулкач хушшинче çу сисмесĕрех иртет, тет. Хĕл те ларать. Халь ĕнтĕ апат та çук. Сивĕ, выçă, тет, Автана. «Хĕл валли апат хатĕрлеме туссем каларĕç-çке мана. Мĕншĕн итлемерĕм-ши?» – шухăшлать, тет, яланах ямăт апат çиме хăнăхнăскер.

Тахçан кăкăрне каçăртса çӳренĕ Автан пуçне усса аран-аран юр ашса утать, тет. Час-часах вăл мучипе кинемее аса илет. «Каялла таврăнсан кĕртĕç-ши мана? Ятласа кăларса ямĕç-ши?» – пуçне ватать, тет, халь Автан.

### Çулçă

Кĕркуннехи хĕвеллĕ уяр кун. Ытти йывăççем пекех, Вĕрене те çулçă тăкнă. Ун çинче ĕнтĕ ик-виçĕ çулçă çеç çакăнса тăнă. Çамрăкрах чухне вăл, çулçисене тăкас мар тесе, нумай тăрăшатчĕ. Анчах хăть мĕнле çине тăрсан та сивĕ вăйлă çил ăна пурпĕрех çаратса хăварнă. Халĕ ĕнтĕ хура-шур сахал мар курнă йывăç хăй çулçине упраса хăварас тесе йăшăл та туман.

Кăçалхи кĕркунне Вĕрене тата ытларах куляннă. Сăлтавĕ те пысак-çке. Унăн сулахай енчи вăрăм турачĕн вĕçĕнче вăштăр çилпе выляса, хĕвел çумрипе çăвăнса чи илемлĕ çулçă ӳснĕ. Кĕркунне çитсен вара вăл сап-сарă пулса тăнă. Вĕренене унăн турачĕ çинче пĕчĕк хĕвел ларнăнах туйăннă. Тен, çавăнпах пит юратнă вăл ăна.

Ара, юратмасăр, юнашар ӳсекен шĕшкĕ те, юман та ăна кашни кунах: «Ах, Вĕрене,

ытла та хĕрхенмелле-çке сана. Çак çепĕç, черченкĕ, пирĕн варманти чи-чи илемлĕ çулçа мĕнле çухатан ĕнтĕ», – тенĕ. Вĕрене хаш-ш кăна сывланă.

Çулçă вара йывăççем мĕн калаçнине илтмен. Тен, илтесшĕн те пулман. Вăл татăлса ӳкнĕ çулçăсем çĕре вĕçсе аннине пăхса ăмсаннă. «Хăçан эпĕ те çапла вĕçĕп-ши?» – шутланă çулçă. Хăйĕн ĕмĕтне пурнăçлас тесе калле-малле сулланкаланă, анчах Вĕрене çĕртен илекен пурлă-çуклă сĕткенне çак çулçă ӳсекен турата панине пула унăн туни хăрса типменнине пĕлеймен-ха вал.

Пĕррехинче Вĕрене вăйĕ пĕтсе çитнипе тĕлĕрсе кайнă. Çулçă, çак саманта çеç кĕтнĕ тейĕн, турат çумĕнчен шăппăн талать те... аялалла вĕçме тытăнать. Çил ăна çавăрса илет те çӳлелле-аялалла ярăнтарма тытанать. «Ах, эпĕ те вĕçетĕп! Мĕнле телей! Мĕнле ырă самант! Эпĕ кайăк пек вĕçетĕп!» – савăннă вăл. Кăшт вăхăт вĕçкелесен çулçă турат çумĕнчен татăлнă чухнехи пекех шăппăн çĕр çине ӳкнĕ. «Мĕскер ку? Мĕншĕн вĕçместĕп?» – ăнланайман вăл. Унталла-кунталла пăхкалана, ун тавра пĕрешкел шăпалла тĕрлĕ çулçă выртать иккен. «Çук, çук, эпĕ çĕрме тытанатăп капла! Манăн вĕçес килет!» – кăшкăрнă çулçă. «Мĕн аташатăн эс, шăпăрт кăна çывăрас чух. Пирĕн шăпа çапла», – анасланă май сăмах хушнă ăна юнашарах выртакан юман çулçи. «Çук, эпĕ тепре вĕçетĕпех! Мана çил кăшт çеç тĕксе ятăр, эпĕ вăй илсе çӳлелле çĕкленĕп», – ĕмĕтленнĕ вăл. Анчах вăйлă çил вĕрсен те çулçă çĕкленеймен, çĕр тăрăх кăна кускаланă.

Унтан пĕр вĕçĕм сивĕ çумăр çума пуçланă. Çулçă шăнса ĕнтĕркенĕ. Хай сывлашра вĕçнĕ саманта аса илсе вăл хуйăхне пусарнă. Шаннă, ĕненнĕ çулçă тепре çĕкленессе.

Пĕр ир çумăр лăскама чарăннă. Хĕвел те пăхнă. Вăйран кайнă çулçă ăшша туйса вăраххăн куçне уçнă. Вăл хăй патнелле Пысăк çынпа Пĕчĕк çын утса пынине курах кайнă. Вĕсен аллинче карçинкка. Пĕшкĕне-пĕшкĕне çĕр çинче тем шыранă вĕсем. Сасартăк çулçă Пысакки тепĕр утăм тусанах хăй унăн атти айне пуласса ăнланса илнĕ. «Пĕр самант сывлашра пулассишĕн мĕн чул асап курмалла. Акă, халь кĕске пурнăçăм лапра ăшĕнче вĕçленĕ», – шухăшлана вăл. Çулçă вилме хатĕрленсе куçне хупнă. «Атте, ан тапта! Пăх-ха, мĕнле илемлĕ вĕрене çулçи», – илтнĕ вăл. Куçне уçсан, хăй умĕнче Пĕчĕк çын тăнине курнă. «Эпĕ ăна киле илсе каятăп, вазăна лартăп», – тенĕ Пĕчĕкки. Унтан пĕшкĕннĕ те çулçа çĕклесе илнĕ. Çулçă вара сасартăк вĕçерĕнесрен хăраса алă çумне лăпчăннă. Вăл хăйне ача аллинче ăшă та шанчăклă туйнă.

## Уйăх тата Упа çури

Упа çури вăрманта аташса кайнă. Вăл чи малтанах хăй аташнине сисмерĕ-ха, сăмса айĕн ĕнерлесех хăмла çырли çирĕ. Каç пуласпа вара килне кайма пуçтарăнчĕ. Каç та пулчĕ. Каçхи вăрман хăрушшăн курăнать. Упа çурине кĕç-вĕç тĕмсем хушшинчен такам, питĕ-питĕ хăрушăскер, тухса таçти шăтăка сĕтĕрсе каяссăн туйăнать. Хăрушă. Шиклĕ. Анчах Упа çури ниме пăхмасăр утрĕ те утрĕ. Ара, килте ăна ашшĕпе амăшĕ кĕтеççĕ-çке. Пăшăрханаççĕ ĕнтĕ вĕсем, шырама та тухрĕç пулĕ. Упа çури, халь-халь ашшĕ-амăшне тĕл пулас пек, утăмне хăвăртлатрĕ. Анчах... Мĕн ку? Умра сарлака кӳлĕ сарăлса выртать иккен. Ку кӳлле Упа çури нихăçан та курман. Хăй чăнах та аташса кайнине, килĕ еннелле мар, пачах урăх çĕрелле утнине ăнланса илчĕ вăл. Çыран хĕрне ларчĕ те хурланса йĕрсе ячĕ.

– Мĕншĕн йĕретĕн, мĕншĕн хурланатăн, Упа çури? – илтĕнчĕ çепĕç те лăпкă сасă.

Упа çури пуçне çĕклесе пăхрĕ. Амăшĕн сасси пекех туйăнчĕ ăна. Анчах таврара никам та çук иккен. Пĕчĕк чĕрчун тата хытăрах хурланса йĕме тытанчĕ.

– Лăплан, лăплан, Упа çури. Йĕрсе ларнипе нимĕн те тăвайман, – тет каллех çав сасă.

– Кам эсĕ? Мĕн кирлĕ сана? – шиклĕн сас пачĕ Упа çури.

– Эпĕ – Уйăх. Куратăн-и мана?

– Курмастăп.

– Куçна куççультен шăлса типĕт те кӳлле пăх. Куратăн-и?

Чăнах та иккен, кӳлĕре Уйăх çуталса кăна ларать!

– Куратăп. Анчах эсĕ кунта мĕн тăватăн? Санăн тӳпере пулмалла-çке, – тĕлĕнет Упа çури.

– Эпĕ унта çӳреттĕм те ĕнтĕ. Сасартăках эсĕ йĕнине илтрĕм те, акă, шыв çине анса

лартăм. Санпа калаçса сана йăпатас терĕм, – ăнлантарать Уйăх.

– Çук, мана никам та йăпатаймасть...

– Мĕнле хуйхă сан? Каласа пар мана, пулăшма тăрăшăп.

– Эп... эп аташса кайрăм, – сасси чĕтренсе тухрĕ Упа çурин.

– Э-э-эй, куншăн ан та кулян. Эп сана пулăшма пултаратăп, – савăнса кулчĕ Уйах. – Атя, тăр та ман хыççăн ут.

Утрĕç вара çапла иккĕн: Уйăх тата Упа çури. Уйăхĕ çӳлте çул çутатса пырать, Упа çурийĕ сукмакпа таплаттарса пырать.

Нумай утрĕç-и, сахал-и, эпир ăна пĕлместпĕр, анчах вĕсем Упа çури пурăнакан çурт умне çитсе те тăчĕç.

– Тавтапуç сана, Уйăх. Атя, пирĕн пата кĕрсе тух, – хăнана чĕнчĕ савăннă Упа çури.

– Тавах, кĕрсе тăмастăп. Эп васкатăп.

– Çывăрма васкатăн-и? – хăйĕн пит çывăрас килнипе çапла ыйтрĕ пулинех Упа çури.

– Çук, çывăрма мар. Каçхи вăрманта сан пек инкеке лекнĕ чĕр чунсене пулăшма васкатăп, – терĕ те Уйăх, пĕлĕт тăрăх хăвăрт шуса кайрĕ.

Упа çури ăна курăнми пуличченех алă сулса тăчĕ.

## Тилĕпе Чĕрĕп

Çулла. Вăрманти сукмакпа Чĕрĕппе Тилĕ пыраççĕ. Хăйсем тахçанхи туссем пек пĕр-пĕрин çине ăшшăн пăхса тем çинчен кăмăллăн калаçаççĕ. Акă, çывхарсах пыраççĕ вĕсем, мĕн çинчен юмахланине илтме те пулать.

– Асăрхаран-и, Тилĕ тус, çанталăк паян ытармалла мар, – тет Чĕрĕп.

– Çапла-а, сăмах та çук ĕнтĕ, çанталăк лайăх, – хуравлать Тилĕ.

– Пăх-ха, пăх, мĕнле илемлĕ чечек! Епле вăл черченкĕ! Эп халиччен кун пеккине курман, – тет сулахаялла тĕллесе Чĕрĕп.

– Кун пеккине эпĕ те курман халиччен. Чăн та, пит хитре, – сăмах хушмасăр юлмасть Тилĕ.

– Паян тата кайăксем те уйрăмах тăрăшса юрлаççĕ пек. Чăн-чăн концерт тейĕн, – çаплах çут çанталак илемĕпе киленет Чĕрĕп.

– Çапла, кайăксем те паян уйрăмах... – выçă куçĕпе чеен пăхать Тилĕ çулташĕ çине.

– Ах, мĕнле ырă! – чăтаймасăр аллисене сарса пăрахать Чĕрĕп, асăрхану çинчен мансах.

Çав вăхăтра Тилĕ Чĕрĕпе хап! ярса тытать те çисе ярать.

– Вăт, халь мана та ырă. Чăнах та, кунĕ те паян лайăх, чечекĕ те илемлĕ, кайăксем те еплерех шăрантараççĕ... Эх, пурăнас килет! – тет хавхаланса хĕрлĕ тĕслĕ çамламас хӳре.

Тилĕ вăл чее чĕрчун. Унпа асăрханулла пулмалла, унсăрăн вăл та сана, çут çанталăкпа киленекен пĕр айăпсăр Чĕрĕпе пĕтернĕ пек, пĕтерсе хума пултарать. Эс мĕн каланине вăл каçса кайсах тимлет пек, анчах хăйĕн пуçĕнче пач урăх шухăшсем. Çавăнпа та, ачасем, вăрманти сукмакпа Тилĕпе юнашар ан утăр. Вăрманне те пĕччен ан çӳрĕр.